27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
10
ЮНКУН
6(6757) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Суту-илӳ ĕçне куллен лайăхлатса пымалла

Суту-илӳ организацийĕсен хисеплĕ задачи вăл—государство паракан апат-çимĕçсемпе тата таварсемпе тĕрĕс усă курса, выранти резервсемпе май пур таранах усă курса, ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерессипулать. Çак ĕç пĕтĕм государствăпа халăх пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Суту-илӳ работникĕсем нумайĕшĕ халăх умĕнчи хăйсен хисеплĕ тивĕçне лайăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вăрçă çулĕсенче суту-илӳ работникĕсем, промышленноçпа ялхуçалăх работникĕсен примерĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, сахал мар çитĕнӳсем турĕç. Иртнĕ çулта, малтанхи çурçул итогĕсем тăрăх, Вăрмар райпотребсоюзне ВЦСПС-па СССР Суту-илӳ Халăх Комиссарначĕн тата ССР Союзĕпе РСФСР Центросоюзĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Союзторгплодоовощăн республикăри трестне, Заготживсырьен Канаш районĕнчи конторине СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн пĕрремĕш премийĕ сене панă. Хăйсен ĕçне лайăх организацилени тĕшĕн премисем илнĕ магазинсемпе столовăйсем те чылай.

Республикăри суту-илӳ работникĕсем нурте халăхпа государство умĕнчи ответлăха туйса ĕçлене пулсан, суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче большевикла йĕркелĕх тата культурăлăх тума пур майсем те пулнă. Анчах та чылай çĕрте çав майсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ-ха. Акă выранти резервсемпе усă курас ыйтăва илер. Выранти промышленноçпа апат-çимĕç промышленность предприятийĕсенче, промысла кооперации артелĕсенче халăха валли куллен кирлĕ таварсем йышлăн туса кăларма пулать. Апла пулин те, магазинсемпе лавкасенче выранта тунă таварсем пачах та çитлĕксĕр. Çакă вăл, чи малтанах суту-илӳ организацисемпе выранти промышленность хушшинче кирлĕ пек çыхăну пулманнинчен килет. Суту-илӳ работникĕсем выранти чĕртаварсенчен хуçалăхра кирлĕ япаласем тăвассине йĕркелессишĕн тăрăшмаççĕ. Унтан та ытларах, вĕсем складсемпе магазинсене кӳрсе пынă таварсене те вăхăтра вырнаçтармаççĕ. Çапла, потребкооперации склачĕсенче 4 миллион тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ таварсем выртаççĕ.

Халĕ, совет ĕççыннисем хăйсен мĕнпур вайĕпе резервĕсене тăшмана çĕнтерес ĕçе панă вăхăтра, çĕршывшăн кашни килограмм çăкăр, тăвар, супăнь тата ытти таварсем те хаклă. Çапах та суту-илӳ организацисенче чылай чухне нормăпа паракан таварсемпе тĕрĕс усă курманни те пулкалать. Хăшпĕр чухне таварсене суту-илӳ работникĕсем е тата вĕсен паллакансем хушшинче салатса янисем пулаççĕ. Çапла, Сĕнтĕрвăрри райпотребсоюзне педагогика институтĕнчи преподавательсемпе студентсем валли пусма-таварсем уйăрса панă пулнă. Анчах та вăл таварсемпе тĕрĕс усă курман. Кун пек фактсене ытти районсенче те курма пулать. Çакă вăл суту-илӳ организацисенче дисциплина çӳрĕкки çинчен, суту-илӳ йĕркине пăсакансене хирĕç кирлĕ пек кĕрешменни çинчен калать. Суту-илӳ работникĕсен çакна ялнах асра тытмалла: вĕсем халăх тарçисем пулса тăраççĕ. Апла пулсан вĕсен совет суту-илӳ йĕркине çирĕппĕн пăхăнса, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемелле.

Суту-илӳ организацисенче отчетпа учет ĕçне начар йĕркелени, дисциплина çӳрĕк пулни, контроль ĕçне кирлĕ пек организацилемени растратăсем тăвасси патне илсе пырать. Потребкооперации системинче растратăсем çĕршер пин тенкĕ шутлакаççĕ. Çапах та çав укçа-тенкĕне шыраса илесси пачах та çитлĕксĕр пырать-ха. Чăвашсоюзпа райпотребсоюз руководителĕсем растратăсене шыраса илме васкамаççĕ. Судпа прокуратура органĕсем те вăл ĕç çине çитлĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Растратăсем нумай пулни вара таварçаврăнăш планне тултарас ĕçе чăрмавсем кӳрет.

Магазинсемпе столовăйсенче тасалăхпа йĕркелĕх сахал пулни тата суту-илӳ работникĕсем ĕççыннисен ыйтăвĕсене пурнăçлама тăрăшманни çинчен калаçнине часчасах илтме пулать. Суту-илӳ работникĕсем хушшинче хăйсен ĕçне çӳрĕк туса пыракан çынсем сахал мар-ха. Тĕслĕхсем шырама инçете кайма кирлĕ мар, вĕсене магазинсемпе столовăйсене кĕрсенех курма пулать. Шупашкарти 7-мĕш столовăйĕнче апат-çиме çӳрекенсене стакансем çук тесе чей памаççĕ. Муркаш ялповĕн магазинне лампа пулман пирки каç пулнă-пулманах хупса лартаççĕ. Мĕн вара, ялпо лампа тупма пултараймасть-и? Пултарать, анчах ялпо руководителĕсем çавăрăнăçулла ĕçле ме тăрăшни çитмест.

Пирĕн тăван çĕршыв тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен суту-илӳ работникĕсене пысăка хурса хаклать. Нумай пулмасть, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, вăрçăн йывăр условийĕсенче партипе правительствăн заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн суту-илӳ работникĕсен пысăк ушкăнне орденсемпе медальсем парса наградăланă. Наградăланисем хушшинче пирĕн республикăри работниксем—Вăрмар районĕнчи Кавал ялпо председателĕ Кудряшов, Сĕнтĕр районĕнчи Ювановăри ялпо председателĕ Седюшкин тата ытти юлташсем пур.

Суту-илӳ работникĕсен тăван çĕршыв вĕсене ответла ĕç шанса панине пĕр минутлăха та манма юрамасть. Пирĕн, çывăх вăхăтрах мĕнпур çитменлĕхсене пĕтерсе, суту-илӳ ĕçне халăх ыйтăвне лайăх тивĕçтерес май йĕркелесе ямалла. Совет суту-илĕвĕн йĕркине пăсакансене хирĕç тимлĕн кĕрешни, контроль ĕçне вăйлатни суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлеме пултарулла кадрсене суйласа илни тата вĕсене вĕрентсе пулăшса пыни кирлĕ. Суту-илӳ организацийĕсенчи кашни работник, совет суту-илĕвĕ пирĕн тăван ĕç пулнине туйса, тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлетĕр.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче потребкооперации системинче отчетпа суйлав кампанийĕ пулса иртрĕ. Райпотребсоюзсемпе ялпосене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ кадрсем пычĕç. Чăвашпотребсоюз руководителĕсен вăл кадрсене совет суту-илĕвĕн йĕркисемпе паллаштармалла, дисциплинăна пăхăнма вĕрентмелле. Ревизи комиссисемпе лавка комиссийĕсен ĕçне татăклăнах лайăхлатни кирлĕ. Вĕсен ĕçне лайăх организацилени таварсене çаратассине, растратăсем тăвассине пĕтерме май парать.

Суту-илӳ ĕçĕ халăх пурнăçĕнчи куллен кирлĕ ыйтусемпе таччăн çыхăнса тăни партипе совет организацийĕсем çине пысăк ответлăх хурать. Вĕсен суту-илӳ ĕçне куллен сăнаса тăрса, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшмалла. Суту-илӳ ĕçĕнче большевикла йĕрке тума, суту-илӳ работникĕсене воспитани пама тăрăшас пулать.

Суту-илӳ работникесен хисеплĕ тивĕçĕ—хăйсен ĕçне лайăхлатса пырасси пулать. Çавна тума пирĕн майсемпе условисем çителĕклĕ таранах пур.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Выранти промышленность предприятийĕсемпе апат-çимĕç комбиначĕсен тата промысла кооперацие инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ выранти промышленность предприятийĕсемпе апат-çимĕç комбиначĕсен тата промысла кооперацие инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура çак предприятисемпе комбинатсем тата артельсем мала тухнă тесе йышăннă:

ВЫРАНТИ ПРОМЫШЛЕННОТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН АМАРТАВĔНЧЕ Вăрнар районĕнчи промкомбинат (управляющийĕ Кузнецов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) мала тухнă. Вăл декабрьти плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 136 процент тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 137,3 процент тултарнă. Çавна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Вăрнар районĕнчи промкомбинатрах хăвармалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа панă.

Сĕнтĕрвăрринчи промкомбината, декабрь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 108 процент тултарнăскерне, ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа панă.

Декабрь уйăхĕнче Комсомольски, Кувакино, Пăрачкав, Çĕрпӳ, Шупашкар, Чкаловски, Шăхасан районĕсенчи тата Улатăр хулинчи промкомбинатсем лайăх ĕçлени палăртнă.

АПАТ-ÇИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕН АМАРТАВĔНЧЕ Улатăрти комбинат (управляющийĕ Гаршин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Поверенов юлташ) мала тухнă. Вăл декабрь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 585,3 процент тултарнă. Çакна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкар хулинчи апат-çимĕç комбинатĕнчен илсе, Улатăрти апат-çимĕç комбинатне памалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 4.000 тенкĕ укçа панă.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Кувакино, Сĕнтĕр районĕсенчи тата Улатăр, Шупашкар, Канаш хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН АМАРТАВĔНЧЕ Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артель (председателĕ Бурашников юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Спиридонов юлташ) мала тухнă. Вăл уйăхри плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 119,4 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 125 процент тултарнă. Çакна шута илсе, Чăваш АССР-ĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артельтех хăвармалла тунă.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнă Шупашкар районĕнчи «Арăслан» артеле 4.000 тенкĕ, Чапаев ячĕпе тăракан артеле 3.000 тенкĕ парса премилемелле тунă.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Октябрьски районри «Труд», Етĕрне районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан, Ишлей районĕнчи Чурачăкри, Канашри «Авангард», Шупашкарти «Металлист», Сĕнтĕрвăрринчи «Парижская Коммуна», Октябрьски районри «Большевик», Шупашкарти «Культура» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН АМАРТАВĔНЧЕ Канашри «Красный воин» (председателĕ Корчагин юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Кизилов юлташ) мала тухнă. Вăл уйăхри плана пĕтĕм продукци енĕпе 116 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 115,8 процент тултарнă. Çакна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри «Красный воин» артеле памалла тунă тата ăна 15.000 тенкĕ укçа парса премилене.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчи плана иртттерсе тултарнă Улатăрти «Союз инвалидов» артеле 10.000 тенкĕ, Сĕнтĕрти «Производственник» артеле 3.000 тенкĕ парса премиленĕ.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Йĕпреçри «Помощь», Чакаярти «Красный стрелок», Тукашри «Путь коммунизма», Октябрьскинчи Чкалов ячĕпе тăракан, Турайри «Рекорд», Атыковăри «Патрон» тата Шĕнерти «20 лет Чувашии» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту: 1944 çулта парти ретне илнин итогĕсем çинчен тата Чăваш республики 25 çул тултарнине уявлама хатĕрленес майпа хулана илемлетсе лайăхлатмалли мероприятисем çинчен сӳтсе-явре.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ. Шупашкар хулинчи парторганизаци 1944 çулта парти ретне пĕтĕмпе 663 çынна, çав шутран ВКП(б) членне 241 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 422 çынна илнĕ. Парти ретне илнисем хушшинче рабочисем 172 çын, инженерла-техникла работниксем 88 çын, 18 врач, 20 учитель.

Парти ретне хулари чи лайăх çынсене илнĕ. Вĕсем хушшинче пĕр заводри мастер, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă И. Харитонов юлташ, Шупашкар хулинчи çыхăну конторинчи работница, «Знак почета» орденĕпе наградăланă Свинцова юлташ чăваш ачисен вăтам шкулĕн директорĕ, «За трудовое отличие» медальпе наградăланă Волкова тата ытти юлташсем пур.

Çав вăхăтрах партине илес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Партине илес тĕлĕшпе Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри, пир-авăрпа табак фабрикисенчи тата торф кăларакан предприятири парторганизацисем çитлĕксĕр ĕçлеççĕ. Выранти промышленноçпа промысла коопераци предприятийĕсенче тата хула çывăхĕнчи колхозсенче коммунистсем сахал. Хăшпĕр парторганизацисем çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе çитлĕксĕр ĕçлеççĕ. ВКП(б) кандидачĕсен членĕсене пурне те порученисем паман. Хăшпĕр парторганизацисенче партине илнĕ чухне кашни çынна уйрăмăн суйласа илес йĕркене пăснисем пулнă.

1944 çулта комсомолăн хулари организацийĕ пачах та çитлĕксĕр ӳснĕ. Вăл 1943 çулта комсомол ретне 1798 çамрăка илнĕ пулсан, иртнĕ çулта вара 1.063 çамрăка çеç илнĕ. Çакă вăл хăшпĕр парторганизацисен секретарĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе сӳрĕклетнĕ пирки пулнă.

Романова юлташ доклачĕ тăрăх прение Полукаров, Иванов, Брикер, Соловьева юлташсем тухса каларĕç.

Кун хыççăн пленум Чăваш республики 25 çул тултарнике уявлама хатĕрленес майпа хулана илемлетсе лайăхлатмалли мероприятисем çинчен хула совет исполкомĕн председателĕн Аникин юлташăн докладне итлерĕ.

— Республикăн столицинче культурăллă йĕрке тăвасси,—тет докладчик,—Чăваш республики 25 çул тултарнине уявлама хатĕрленĕ тапхăрта хулари парторганизаци умĕнче тăракан ответлă задачăсенчен пĕри пулать.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Шупашкар хулине илемлетсе юсама 2.093 пин тенкĕ хывнă. Ку хисепе коммуналлă тата çуртйĕр строительствине хывнă укçа кĕмест. Анчах пирĕн тата нумай ĕçсем тумалла-ха. 1944 çулта хулана юсаса илемлетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне пурĕ те 76,1 процент çеç тултарнă. Урамсене сарас, кĕперсем тăвас тата ытти чылай ĕçсене пурнăçа кĕртсе çитермен. Хулари садсене, Атăл хĕрринчи бульвара кирлĕ пек юсаса йĕркелемен. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсемпе парторганизацисем хăйсен çуртĕсене, картасемпе алăксене юсаса йĕркелес тĕлĕшпе çӳрĕк ĕçленĕ, хăйсен коллективĕсене хулана юсаса илемлетес ĕçе çитлĕксĕр явăçтарнă.

Чăваш республики 25 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май, уйрăмăнах столицăна юсаса илемлетес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çулсене, кĕперсене, тротуарсене, пусмасене юсамалла, заводсемпе фабрикăсен, культурăпа çутĕç тата медицинăпа совет учрежденийĕсен çурчĕсене, парксемпе садсене, пурăнмалли çуртсене культурăллă йĕркене кĕртмелле. Çак ĕçсене тунă çĕре хулари ĕççыннисене анлăн явăçтармалла.

Аникин юлташ доклачĕ тăрăх прение Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ Братчиков юлташ тухса каларĕ. Вăл магазинсемпе лавкасене тата столовăйсене культурăллă йĕркене кĕртме кирлине палăртрĕ. Неверов юлташ (пристань) перевоз патне пымалли çулсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планĕпе палланитарчĕ. Романов юлташ (Атăл леш енчи торф предприятийĕ) Атăл урлă каçарас ĕçе лайăхлатма кирли çинчен каларĕ. Канатов юлташ строительство материалĕсене халех хатĕрлес ыйтăва лартрĕ. Енчиков юлташ (ВКП(б) Обкомĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ) кăçал спорт площадкисем, стадионсем тăвас ĕçе вăхăтра пурнăçлама кирли çинчен каларĕ.

Прение çавăн пекех Якунин, Бугаев (хула совет исполкомĕ), Ермолаева юлташсем тухса каларĕç.

Пленум сӳтсе-явнă ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленумра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Ахазов, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин юлташсем пулчĕç.

Шупашкар хулинчи суту-илӳ работникĕсен пухăвĕ

Суту-илӳ работникĕсене СССР орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă ятпа çак кунсенче Шупашкар хулинчи суту-илӳ работникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта партипе совет, профсоюз тата хуçалăх организацисен преставителĕсем те пулчĕç. Пухура Суту-илӳ тата пĕрлешӳллĕ апатланас ĕçри работниксен задачисем çинчен Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ Братчиков юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче суту-илӳ работникĕсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне парти пе правительство пысăка хурса хаклани çинчен пĕлтерсе, халăх ыйтăвне тивĕçтерессишĕн вăйсене ӳстерсе ĕçлеме чĕнет.

Прение Глаговский (ОРС), Торчинский (çăкăр пĕçерекен комбинат), Швец (Чебторг), Егорова (столовăйсен тресчĕ), ВКП(б) хула Комитечĕн секретарĕ Ардаматский, хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин, Меламед (4-мĕш столовăй) юлташсем тухса каларĕç.

Пуху таварçаврăнăш планне срокчен тултарас тата столовăйсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе обязательствăсем йышăнчĕ.

УРАЛТИ АЛМАЗ

1829 çулта Уралта, Крестовоздвиженски прииск районĕнче, старательсем Российăра пирвайхи хут алмаз тупнă. Çавăн хыççăн иртнĕ 110 çул хушшинче Уралта 239 алмаз тупнă. Вăрçă вăхăтĕнче алмаз тупасси нумай ӳссе кайнă. Иртнĕ çулта алмаз 1941 çулхинчен 20 хут ытларах тупнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, вăрçă вăхăтĕнче алмаз 110 çул хушшинче тупнинчен темиçе хут ытларах тупнă.

Уралта алмаз выртакан 19 çĕнĕ вырăн тупнă. (ТАСС).

ЛЬВОВРИ ÇĔНЕ ПРЕДПРИЯТИСЕМ

Львов хулинче çĕнĕрен промышленность предприятийĕсем тума йышăннă. Унта машинăсем тăвакан завод тата автомобильсем пухакан завод тумалла, электролампа заводне юсаса хута ямалла. Электролампа завочĕ 1945 çулта чылай продукци туса кăлармалла. Çавăн пекех тата радио заводĕ тата, ată-пушмак çĕлекен çĕнĕ фабрика тăваççĕ. Çывăх вăхăтрах патефон, парфюмери фабрикисем тата пир-авăр комбиначĕ тума пуçламалла. (ТАСС).

Парти историне вĕренеççĕ

ЙĔПРЕÇ. ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ çуммĕнче парти шкулĕ ĕçлет. Унта пурĕ 46 çын вĕренеççĕ. Шкулта занятисем расписани тăрăх иртеççĕ. Халĕ унта Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тата ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн пĕрремĕш сыпăкне вĕренсе пĕтернĕ. Вĕреннĕ материала çирĕплетсе хăварас майпа çак кунсенче вĕренекенсен семинарĕ пулса иртрĕ.

Кунсăр пуçне районра тата 15 политшкул ĕçлет. Лайăх ĕçлекенсенчен уйрăмах партин Хурамалти пуçламăш организацийĕ çуммĕнчи шкула палăртмалла. Унта 31 çын çӳрет. Вĕсем нумайĕшĕсем—колхоз активисчĕсем. Вĕренекенсем занятисене тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ, вĕреннĕ темăсем тăрăх ыйтусем нумай параççĕ, кирлĕрех вырăнсене çырса хураççĕ. Кружока çӳрекенсем хушшинче 50—60 çулхи колхозниксем те пур.

П. КУРАКОВ.

ÇУРÇĔРЕ ТЕПЧЕСЕ ПЕЛЕКЕНСЕМ

Çурçĕрти геологи управленийĕ 1944 çулхи ĕçсене пĕтĕçтерсе çитерне. Сысол шывĕ районĕнче тимĕр тăпри нумай пуррине палăртнă. Малтанлăха шутланă тăрăх, çав тимĕр тăпри. Кажимри чугун шăратакан завода нумай çула çитмелле. Тимĕр тăпри çавăн пекех Вăтам Печора таврашĕнче пуррине те палăртнă.

Сыктывкар хулинче геологи конференцине иртнернĕ. Вăл конференцире СССР-ти Наука академийĕн базинче ĕçлекен наукăй работниксем пулнă. (ТАСС).

Коробков машинистăн лайăх опытне чугун çул транспортĕнче сарасси çинчен

ÇУЛЙĔР ХАЛАХ КОМИССАРĔН И. В. КОВАЛЕВ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТАН ПРИКАЗĔ

Тулăри Дмитрий Коробков машинистăн лайăх опытне чугун çул транспортĕнче сарасси çинчен Çулйĕр Халăх Комиссарĕ И. В. Ковалев генерал-лейтенант ятарласа приказ кăларнă.

Вăрçă вăхăчĕ, тенĕ приказра, чугун çул çинчи топливо ыйтăвне улăштарчĕ. Вăл çар промышленноçĕ валли кирлĕ лайăх йышши çĕр кăмрăкне перекетлеме хушрĕ. Çавăн пирки те чугун çулсем çинче Мускав, Челябинск, Богословск тата ытти бассейнсенчи япăхрах çĕр кăмрăкĕпе усă курма пуçланă. Япăхрах хăмăр çĕркăмрăкĕпе поездсене хăвăрт илсе çӳреме май çук тенине пăхмасăрах, Коробков Мускав патĕнчи хăмăр çĕр кăмрăкĕпе хутакан паровозăн пысăк клапанне пĕр хăрамасăрах уçнă. Вăл вара поездсене сехетре Тула деповĕнчи машинистсенчен 6,5 километр хăвăртрах çӳретме пуçланă.

Çак пуçарулăхшăн, лайăх ĕçленĕшĕн, топливăна перекетленĕшĕн тата техникăлла хăвăртлăха ӳстернĕшĕн Коробков машиниста «Хисеплĕ железнодорожник» ятлă значок парса наградăланă. Унăн помощникне Фролова—«Отличнăй паровозник» значокпа, Лобанова кочегара—«Сталин призывĕн ударникĕ» значокпа наградăланă. Вĕсене пурне те укçа парса премиленĕ.

Халăх Комиссарĕ çул начальникĕсене, паровоз службисен, отделенисемпе деповсен начальникĕсене поездсем çӳретес тĕлĕшпе малта пыракан машинистсем кăтартса панă майсене вĕренессине организацилеме, лайăх машинистсен опытне тăтăшах вĕренме, вĕсен пуçарулăхне пулăшма хушнă. Чугун çул транспорчĕн Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институтне Коробковпа ытти лайăх машинистсен опытне вĕренес ĕçе организацилеме хушнă.

(ТАСС).

САРАТОВ—МУСКАВ ГАЗОПРОВОДА ТУМА ПУЛАШАКАН КОМИТЕТ

Нефтяниксен Пĕтĕм Союзри инженерипе техника обществи çуммĕнче Саратовпа Мускав хушшинчи газопровода тума пулăшакан комитет организациленĕ. Комитетăн секцийĕсем магистраль линине, валеçекен линисене тата газ парса тăрас ĕçе автомализацилес ыйтусене сӳтсе-явмалла. (ТАСС).

«СЕВЕРНЫЙ ПРЕСС» ЗАВОДРА ПАТЕФОНСЕМ ТУМА ПУÇЛАÇÇĔ

Кăçал Ленинградра каллех патефонсем тума тытăнаççĕ. Вĕсене «Северный пресс» завод тума пуçлать. Халĕ унта тĕрлĕ штампсемпе ытти хатĕрсене тăваççĕ. Чи малтан мембранăсем тума тытăнаççĕ. Çул тăлăк хушшинче завод темиçе пин патефон туса кăлармалла. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем БУДАПЕШТ районĕнче тăшманăн хулара хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе пынă. 130 квартал туртса илнĕ.

БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Январĕн 7-мĕшĕнче ку районра нимĕçсен 90 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем ДИВА, ШАРКАН, ШРОБАРОВА, МАРСЕЛОВА, МОЧА, ВИРТХОВЫ, ПУСТАТИНА, ГАДВАНЬ ялĕсене туртса илнĕ. Январĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра тăшманăн 1.520 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Январĕн 7-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Будапешт районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Совет подразделенийĕсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, гитлеровецсене виçĕ завод территорийĕнчен хăваласа кăларнă. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă тата 3 бронетранспортер пĕтере тăкнă. Танксене пемелли 5 тупă тата 26 пулемет тытса илнĕ. Паян хулан вăтаçĕр пайĕнчи пĕр урамри хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман пысăк чул çуртсенче çирĕпленсе тăрнă та, пысăк калибрлă пулеметсемпе тата автоматсемпе персе, совет подразделенийĕсене малалла кайма паман. Гварди кĕçĕн лейтенанчĕ Астахов ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ кĕтесри çурта, нимĕçсем пот туса хунăскер, атакăланă. Тупăсене усă позицисем çине кăларса лартса, пирĕн боецсем тăшман персе тăракан вырăнсене пусарса лартнă та çав çурта вăркăнса кĕрсе кайнă. Çуртăн пĕр хучĕ хыççăн тепĕрне тасатса пырса, çав çуртра ларнă нимĕç пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен оборонин узелĕ пулса тăракан çурта туртса илнипе пирĕн подразделенисем тăшманăн тепĕр ушкăнĕн каялла чакмалли çулне татса пăрахнă.

* * *

Будапештран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре çаплах хаяр çапăçусем пынă. Ирхине артиллери вăйлă персе хатĕрленĕ хыççăн тăшман каллех Естергом хулипе Будапешт хули хушшинчи районра атакăсем пуçласа янă. Анăçри участокра тăшман çапăçăва танксен пысăк вăйĕсене кĕрте-кĕрте янă. çапла нимĕçсем, вăйлăн пырса çапса, совет çарĕсене çĕмĕрсе тăкма, Будапешт хули патне татса кĕме хăтланнă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсем тата танкистсем тăшман хĕснине çирĕппĕн чăтса тăнă, нимĕçсене питĕ пысăк сухатусем кӳнĕ. Совет позицийĕсем патне пыракан вырăнсенче тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă техники питĕ нумай выртса юлнă. Çавăн пекех тата Будапештран хĕвеланăçнерехре те вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Ку районра нимĕçсем икĕ енчен атакăланă. Кунĕпех хаяр çапăçу пынă. Тăшман танкĕсене тата бронетранспортерсем çине ларнă пехотăна пирĕннисем тупăсемпе тата минометсемпе вăйлăн пенĕ. Пирĕн чăçсем тăшман атакисене пурне те сирсе янă. Будапешт хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пулса пыракан çапăçусенче нимĕçсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питех те йывăр çухатусем тӳсеççĕ. Кун каçиччен тăшманăн 90 танкне тата 12 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Тăшман атакисене сирсе янă чухне Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем пысăк хăюлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Маршев офицерăн подразделенийĕ хӳтĕлесе тăракан позицисене нимĕçсен танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем тапăннă. Совет боецĕсем тăшманăн 5 атакине сирсе янă, 16 танк персе çĕмĕрнĕ, гитлеровецсен пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Абрамов старши лейтенант ертсе пыракан подразделенин хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пĕр çапăçура нимĕçсен «пантера» йышши виçĕ танкне тата «тигр» йышши тепĕр танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Терешенко гварди лейтенанчĕ ертсе пыракан, танксене хирĕç пĕрекенсен ротинчи боецсем нимĕç пехотин атакине ăнăçлăн сирсе янă, 2 бронетранспортер пĕтерсе тăкнă. Пуганя, Берестнев, Могильников тата Андрейченко командирсен тунă расчечĕсем нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Дунай шывĕн çурçĕр хĕрринче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Нимĕçсем, вăйлăн персе тата контратакăсем туса, совет чăçĕсен наступленине чарма хăтланнă. Пирĕн пехотинецсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, çапăçса малалла куçса пынă. Нимĕçсене Комарно хулинчен 12 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Марселова ялĕнчен хăваласа кăларнă. Пирĕн наступлени туса пыракан чăçсем нимĕçсен «Сент-Ласло» ятлă пехотнăй дивизийĕн чăçĕсене аркатса тăкнă, çак дивизи Венгри фашисчĕсенчен тунă пулнă. Хĕçпăшал тата вăрçă хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтри пĕр участокра пирĕн подразделенисем çапăçса разведка тунă. Совет боецĕсем тăшман тăракан вырăна сасартăк вăркăнса кĕрсе кайнă та хаяр тытăçу хыççăн лайăх позицисем тытса илнĕ. Нимĕçсенчен 25 пулемет, 170 автоматпа винтовка тата темиçе боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕ

Трактористсем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕç

ЕЛЧĔК. МТС-ра тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕç хĕрсех пырать. МТС тракторсене юсамалли 4-мĕш кварталти плана 168 процент тултарчĕ. 25 трактор юсас вырăнне 40 трактор юсанă. Ытти ялхуçалăх машинисене юсассине те плана ытлашшипех тултарнă.

МТС-ри 17 бригадăран 7-шĕ тракторсене юсамалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç. 17-мĕш, 10-мĕш, 6-мĕш бригадăсем уйрăмах кăтартуллăн ĕçлерĕç. Вăл бригадăсенчи трактористсем Китайкин, Казакова, Уткина, Ахматуллин куллĕнхи нормăна 150—200-шер процент тултарса пычĕç.

Тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатма трактористсем хушшинче агитмассăллă ĕçе лайăх йĕркелени нумай пулăшрĕ. Ремонт пуçланнăранпа трактористсем хушшинче Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çинчен 4 хутчен калаçу туса ирттернĕ, совет халăхĕн Отечественнăй вăрçри тата тылри патриотизмĕ çинчен 2 хут доклад туса панă, кашни кунах Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштаратпăр. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра ремонт тумалли плана срокра тултарнăшăн МТС работникĕсене хавхалантармалли мерăсем пирки кăларнă постановление ăнлантарса панă.

Тракторсене юсас ĕç Сталин юлташ докладне сутсе-явнă хыççăн палăрмаллах вăйланчĕ. Трактористсемпе трактористкăсем, Украина ССР-ĕнчи Старо-Бешевски МТС коллективĕ чĕнсе каланине ырласа, социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлеме пулчĕç, тракторсем юсас ĕçе февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлеме обязательство илчĕç.

И. ИГОЛКИН.
МТС-ри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

МТС коллективĕ социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ

Комсомольски МТС работникĕсем Украина ССР-ĕнчи Старо-Бешевски МТС-ĕн тракторисчĕсем, рабочийĕсемпе служащийĕсем чĕнсе каланине сутсе-яврĕç. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Вĕсем тракторсене февралĕн 20-мĕшĕчен, комбайнсене майăн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса хатĕрлеме пулчĕç.

И. Валетов, А. Юманова юлташсем тракторсене юсас ĕçре кулленхи ĕç нормине 200 процентран кая мар тултарса пыма сăмах пачĕç.

А. ДМИТРИЕВА.

Элĕк МТС-ĕн хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата лайăх юсасси калама çук пысăк ĕç пулса тăрать. Анчах та Элĕк МТС-ĕнче тракторсене юсама васкамаççĕ. 1944 çулхи IV-мĕш кварталта планпа 18 трактор юсас вырăнне пурĕ те 11 трактор кăна юсанă. Юсав пахалăхĕ те начар, юсанă тракторсенчен пĕрне те государство комиссийĕ йышăнман. МТС-ра ытти машинăсене юсасси те начар пулса пырать. Пурĕ те 9 сеялка, 24 плуг, 11 культиватор кăна юсанă. МТС директорĕ Яхваров юлташ тракторсене юсас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Тракторсене юсанă çĕрте 80 çын вырăнне 40—50 çын кăна ĕçлет, вĕсем те ирхине 10 сехетре тытăнаççĕ те каçхине 6 сехетре ĕçе пăрахаççĕ. Тракторсене юсанă çĕрте ĕçлекенсем валли столовăй уçман.

Украина ССР-ĕнчи Старо-Бешевски МТС тата республикăри Шăхасан МТС-ĕ чĕнсе каланине кирлĕ пек сутсе-явман, çавна пула социализмлă ăмăртăва сарса яман.

МТС-ра ялхуçалăх машинисене упрамаççĕ. 8 трактор, 6 сеялка, 20 плуг, 11 молотилка, 8 жнейка тата ытти машинăсем колхозсенчех лараççĕ. Мăн Вылăра пĕр молотилка, Элекейкинра пĕр сеялка юр айĕнче лараççĕ. 5-мĕш номерлĕ комбайна ĕçленĕ хыççăн тасатман: сăнчăрсене, магнетона, динамăна, мотора комбайнран уйăрса илмен, вĕсем тутăхса кайнă. 6 колхозра МТС машинисемшĕн никам та ответ тытмасть, мĕншĕн тесен вĕсене никама та алă пустарса паман.

МТС-ри парти тата комсомол организацийĕсем начар ĕçлеççĕ. Комсомол организацийĕн секретарĕ Сартова юлташ 1944 çулхи июнь уйăхĕнчен вара пĕр пуху та ирттермен. Партин пуçламĕш организацин секретарĕ Пахомов юлташ комсомол организацине пулăшмасть. Трактористсемпе трактористкăсем тата юсав ĕçĕнчи рабочисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе йĕркелемен, стена хаçачĕ тухмасть.

Калас пулать, ВКП(б) Элĕк райкомĕ те МТС-са сахал пулăшу парать. Тракторсене юсама тытăннăранпа пурĕ те пĕрре кăна МТС директорĕн докладне итленĕ. Анчах унта та конкретлă кăтартусем паман.

Тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатас тесен, массăллă ĕçе анлăн сарса ямалла. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладне вĕренессине организацилемелле. МТС коллективĕнче ĕç дисциплинине çирĕплетмелле.

Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС коллективĕ чĕнсе каланине тĕплĕн сутсе-явса, кашни тракториста, трактористкăна социализмлă ăмăртăва явăçтармалла. Тракторсене çураки тĕлне пурне те лайăх юсаса хатĕрлессишĕн пикенерех ĕçлемелле.

П. КОЗЛОВ.

Çуракине халех тата тĕплĕн хатĕрленмелле

КАЛИНИНО. «Çутталла» колхоз членĕсем, çитес çулта вăйлă тырпул туса илес шутпа, çуракине тухиччен 10.000 лав тислĕк, 2000 лав торф уя кăларма, 600 пăт кĕл, 100 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма обязательство илчĕç. Вырăнти удобренисене пухса уя кăларас тĕлĕшпе Услапари «Броневик» колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Илнĕ обязательствăсене пурнăçласшăн «Çутталла» колхоз членĕсем çине тăрса ĕçлеççĕ. Халĕ 6.000 лав тислĕк, 720 лав торф уя кăларнă.

«Çутталла» колхоз вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывса çитерчĕ, вĕсене сортласа, вĕсен шăтаслăхне тĕрĕслеттерчĕ. Ялхуçалăх машинисене, плугсене юсаса çитернĕ, ут тавраш ĕсене те çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Калас пулать, районра кая юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Радио», «Молния», «Самолет», Буденный ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем начар хатĕрленеççĕ. Ку колхозсенче вăрлăх фончĕсене мĕнпурĕ те 50—60 процент таран кăна хывнă, вĕсене те сортлама тытăнман. Ялхуçалăх машинисене пуçтарса лартман, вĕсене юсама тытăнман. Иртнĕ çуракине япăх хатĕрленнине пула, çак колхозсенче гектартан вăтам шутпа 8—9 центнера яхăн кăна тырă туса илчĕç. Анчах ку колхозсен руководителĕсем çуракине хатĕрленессипе кăçал та начар ĕçлеççĕ.

Р. ГРИГОРЬЕВА.

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх

Тислĕк ытларах кăларма тăрăшатпăр

Вăрнар районĕнчи «Советская деревня» колхоз кашни çулах уя тислĕк нумай кăларать. «Уя тислĕк ытларах кăларатăн—пулмене тырă нумайрах хыватăн», теççĕ пирĕн колхозниксем. Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх пуçланнăранпа кашни кунах 10 лашапа тислĕк турттаратпăр. Паянхи кун тĕлне 3.400 лав кăларнă. 65 центнер кĕл, 25 центнер кайăк кĕшĕк тислĕкĕ пухрăмăр. Кĕл пухма шкул ачисем нумай пулăшаççĕ. Коля Ежова, Петя Белкин иртен пуçласа тĕттĕм пуличченех кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Пирĕн колхоз тислĕк кăлармалли плана ытлашшипех тултарать.

Колхозра халĕ хĕрӳллĕ ĕç пырать. 20 çын газогенераторлă тракторсем валли чурка хатĕрлеççĕ. Вăрлăхсене сортласа пĕтертĕмĕр, вĕсен шăтаслăхне те çăнаса пăхнă. 32 плуг юсаса хунă, урапасем, экз хăмăчĕсем тата ытти ут тавраш ĕсем те хатĕр. 60 гектар çинче юр тытрăмăр.

Пирĕн колхозниксем килес çул та вăйлă тырпул туса илессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

М. БЫКОВ.
«Советская деревня» колхоз председателĕ.

Кĕле çырмана кăларса тăкаççĕ

КУСЛАВККА. Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăхра районри колхозсем кашни пилĕк кунта 10.000 лав, юлашки пилĕккунлăхра 5.000 лав тислĕк кăлармалла, 600 тонна торф, 300 центнер кĕл, 220 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 220 центнер компост пухса хатĕрлемелле.

Чылай колхозсенче уйăхлăх пуçлансан колхозри пĕтĕм вăя тислĕк кăларнă çĕре мобилизацилерĕç. «Красный Волгарь» тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем кĕл пухмалли плана çурри ытла пурнăçланă. Анчах Куйбышев ячĕпе тăракан колхозра кĕл пухас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Кунта кĕле халĕ те çырмана тăкаççĕ. Çак вăхăта çитсе те уйхире пĕр лав тислĕк те кăларман, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма тытăнман. Тислĕк кăларас тĕлĕшпе Чапаев ячĕпе тăракан колхоз лайăх ĕçлет. Кунта хĕле кĕнĕренпе 4.000 лав тислĕк хатĕрленĕ. 16-мĕш партсъезд ячĕпе тăракан колхоз 5.600 лав, «Правда» колхоз 4.500 лав тислĕк хире кăларнă. Анчах та çак колхозсенче ытти удобренисем — фекали, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен-ха.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Шупашкар районĕнче çуракине хатĕрленмеççĕ

КУКЕÇ. Районри уйрăм колхозсем иртнĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илеймерĕç. Çавна пула çураки вăрăма тăсăлчĕ. Иртнĕ çуракинчи йăнăшсене хăшпĕр колхозсем кăçал та тăваççĕ. Çак вăхăта çитсе те вăрлăх фондне хывса çитермен. Уйрăмăнах çĕрулмипе техникăллă культурăсен вăрлăхĕсене хывасси çителĕксĕр пырать.

Шурчакассинчи Каганович ячĕпе тăракан колхозăн 100 центнер, Абашри «Урожай» колхозăн 48 центнер, Альгешри «8-ое марта» колхозăн 42 центнер, Кӳкеçри «Трактор» колхозăн 34 центнер тĕрлĕ вăрлăхсем çитмеççĕ. Нумай колхозсем ку тарана çитсе те вăрлăхсене сортламаççĕ.

Районри колхозсен кăçал 60.000 лав тислĕк, 8.000 лав торф, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата ытти удобренисем пухмалла. Анчах та паянхи кун тĕлне пурĕ те 1.800 тонна тислĕк кăна хире кăларнă. Торф, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлеме тытăнман.

Г. ПЕТРОВ.

Укерчĕк çинче: Пирĕн земляк гварди лейтенанчĕ В. Попов. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн ăна «За отвагу» тата «За оборону Ленинграда» медальсемпе наградăланă.

Фронтри туссем

Вăрçăра, аслă совет çĕршывĕшĕн пыракан çĕнтерӳллĕ çапăçу хирĕнче, тăсти аякри юлташсемпе те тĕл пулма лекет, пĕрле çапăçма, пĕр-пĕрне пулăшма лекет. Çак икĕ каччă çапăçу хирĕнче тĕл пулнă, пĕрле çапăçнă, пĕр-пĕрне пулăшнă. Халĕ командовани вĕсене çар училищине янă, çула май вĕсем чăваш каччи ялне—Пушнарз кĕрсе тухрĕç.

Çак туссен кунçулĕсем пĕр евĕрлĕ мар пулин те, вĕсем иккĕшĕ те тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнипе паллă пулса тăраççĕ.

1940 çулта вăтам шкул пĕтерсенех, Спиридон Филиппов Тинĕс-Çар флотне кайнă. Вăрçă пуçланиччен Лăпкă океан çинче ишсе çӳренĕ. Вăрçă пуçлансан, флот командующийĕн приказĕ тăрăх, фронта кайнă. Гварди рядовойĕн Филиппов юлташăн Карели, Дон, Сталинград, Балтика тăрăхĕнчи фронтсенче пулма лекнĕ. Вăл темиçе хут аманнă, Сталинграда паттăрла хӳтĕленĕшĕн «За оборону Сталинграда» медале илме тивĕçлĕ пулнă.

1943 çулăн шартлама сивĕ уйăхĕнче çарсемшĕн малалла куçса пыма питех те йывăр пулнă: юр, çулсăр вырăнсем, вăрман, шурлăхсем. Апла пулин те, чăсем пĕрмаях малалла шăваннă. Часть командирĕн малта пыракан подразделенийĕсемпе те, тылрисемпе те çыхăнмалла пулнă. Çак ĕçре пĕртен-пĕр шанчăк—радио пулнă. Филиппов юлташ начальник пулса ĕçлекен радиостанци çак çапăçусем вăхăтĕнче пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ. Пĕр каçхине пĕр подразделенин рацийĕ ĕçлеме чарăннă. Артиллерипе минометран вăйлă персе тăнă хушăрах Филиппов çав подразделенине кайса рацине юсанă. Ку çапăçусенче Филиппова «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Балтика тăрăхĕнчи иккĕмĕш фронтăн çарĕсем тăшмана Хĕвеланăçнелле хăваланă. Филиппов çапăçакан подразделени командирĕн сăнав пунктне кун каçа нимĕçсем хăйсен нумай вăйĕпе темиçе хут та контратакăланă. Сăнав пунктĕнче пĕтĕмпе те тăваттăн пулнă. Автоматсемпе тата гранатсемпе хĕçпăшалланă çак хăюллă тăватă воин тăшманăн контратакисене сирсе-сирсе янă, тăшмана пĕтернĕ. Çак çапăçусемшĕн Филиппова Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ панă.

Çак чăваш ачин тусĕ—Астрахань каччи Михаил Азов та, чылай çапăçусенче пулса, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Вăл 1942 çултанпа тăватă хутчен аманнă. Гварди сержанчĕн Азов юлташăн кăкри Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата «За отвагу» медальпе илемленет.

Икĕ туса колхозниксем тулли кăмăллă кĕтсе илчĕç. Çар училищинчен Хĕрлĕ Çарăн пултаруллă офицерĕсем пулса тухма сĕнсе ăсатрĕç.

Н. ЦВЕТКОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Маас шывĕ районĕнче патрульсем çапăçнă. Геертрейденбергран хĕвелтухăçнерехре союзниксен чăсĕсем Маас шывĕн кăнтăр енче тăшманăн чи малти отрядне атакăланă. Хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Вăл вырăна халь тăшмантан тасатса пыраççĕ.

Арден савăлĕн çурçĕр флангĕнче союзниксен çарĕсем наступлени туса пыраççĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăрса çапăçнă пулин те, союзниксем малалла кайнă. Бастоньрен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем тăшмана Фламьержран сирпĕтсе кăларнă. Бастоньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Арланжран пĕр-икĕ миля хĕвелтухăçнерехри районра пăртак малалла кайнă.

Вингенра хупăрласа илнĕ Германи çарĕсем татса тухма хăтланнă. Союзниксем нумай çынна тыткăна илнĕ.

Виссенбурград кăнтăртарахра тăшман пехоти, танксем пулăшнипе, тăватă хут атака тунă. Çавна пула союзниксен малти чăсĕсем пăртак каялла чакнă.

Рейнăн хĕвеланăç çыранĕнче тăшман çарĕсен Рорвейлер çине тунă атакине сирсе пăрахнă. Тăшманăн ытти чăсĕсем сывăхри Друзенхейма пырса кĕнĕ. Гамбсхеймра çапăçусем пыраççĕ. Эльзас тӳпемĕнче Страсбургран 20 миля кăнтăртарахра тăшман чăсĕсем, Рейн—Рона каналĕ тăрăх çурçĕр еннелле куçаканскерсем, союзниксен çарĕсене Виттенхейм тата Фризенхейм хулисенчен тухса каймалла тунă. Халь çак хуласенчен çурçĕртерехре çапăçусем пыраççĕ.

Çанталăк япăх пулни ĕнер союзниксен авиацине кĕрешме кансĕрленĕ. Январĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ промышленноçпа чугун çул центрĕ пулса тăракан Мюнхена тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италире, 5-мĕшпе 8-мĕш армисен участокĕнче, патрульсем çапăçнă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Боснире, Биелина—Брчко—Челич районĕнче тăшман вăйĕсем пухать. Икĕ енчен те разведчиксем ыраса çӳреççĕ. Хан Писсак—Власеница секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Словенире тăшман Ново Местопа Любляна хушшинчи çула тытса илесшĕн пулнă. Югослави чăсĕсем тăшманăн пур атакисене те сирсе янă. Требнерен хĕвеланăçнерехре кĕрешекен тăшман мотоколоннине пит пысăк çухату кӳнĕ.

Дони Махоляц—Модравска Слатина енче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман пĕрмаях çĕнĕ вăйсем илсе пырать, анчах çавах та малалла куçма пултараймасть.

Славонире тата Лим улăхĕнче çапăçусем пыраççĕ.

ФРАНЦИ ÇАРНЕ ИЛНИ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Францин çар министрĕ Дьетельм çапла каланă: çара 1943 çулта илмелле пулнă çынсене январь уйăхĕн вĕçĕнче, 1944 çулта илмеллисене—çуркунне пуçламĕшĕнче çара илеççĕ. Кунсăр пуçне, офицерсене, унтер-офицерсене, саперсен, инженери чăсĕсен тата çыхăну çарĕсен специалисчĕсене, медицина работникĕсене тата ытти специалистсене те çара уйрăмăн илеççĕ.

США-РА КАРАПСЕМ МĔН ЧУХЛЕ ТĂВАÇÇĔ

ВАШИНГТОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Правительствăн тинĕс комиссийĕн председателĕ Лэнд пĕлтернĕ тăрăх, кăçал США-ра пĕтĕмпе 13 миллион тонна таякан карапсем тума палăртса хунă.

Иртнĕ çулта Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пĕтĕмпе 16.343 пин тонна таякан 1.677 карап тунă. 1943 çулта—19 миллион тоннăлăх тунă.

1942 çулăн пуçламăшĕ тĕлне Пĕрлешӳллĕ Штатсен суту-илӳ флочĕн пĕтĕм йывăрăшĕ 11 миллион тонна чухлĕ пулнă. Çакăн хыççăн çĕнĕ карапсем 43 миллион та 671 пин тонна чухлĕ тунă. 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 4.319 карап тунă, вăл шутра «Либерти» йышши карапсем 2.502. США-н суту-илӳ флотĕнче 195.000 çынна яхăн шутланать.

США-РА ÇАР ЗАЕМНЕ ÇЫРАННИН ИТОГĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: США финанс министрĕ Моргентау каланă тăрăх, США-ра çар заемне 21.621 миллион долларлăх вырăнаçтарнă. Малтан шутласа хунă тăрăх, заема 14 миллиард долларлăх вырăнаçтармалла пулнă. Уйрăм çынсем 5.900 миллион долларлăх çыраннă (малтан 5 миллиард долларлăх çырĕç тесе шутласа хунă пулнă). Банксем, корпорацисем, страховой компанисем тата ытти организацисем те облигаци заемне 15 миллиард долларлăх илнĕ.

АМЕРИКА РЕСПУБЛИКИСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ СТЕТТИНИУСПА ТĔЛ ПУЛСА КАЛАÇНИ

ВАШИНГТОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ Америкăри республикăсен представителĕсем США-н государство департаменчĕн секретарĕпе Стеттиниуспа тата государство департаменчĕн ытти представителĕсемпе тĕл пулса калаçни çинчен пĕлтерни. Тĕлпулура Думбартон-Оксра кăларса тăратнă сĕнӳсене сутсе-явнă тата ку ыйтусем çине Америка республикисем мĕнле пăхнине палăртнă.

ИТАЛИРИ МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔ ТАСАТУ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ДЕКЛАРАЦИ

РИМ, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 6-мĕшĕнче Бономи председатель пулса ертсе пынипе Италири министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав ларура фашистсене хирĕç ĕçлекен верховнăй комиссариат пирки декларации йышăннă.

«Министрсен совечĕ,—тенĕ декларацире,—Сфорца фашистсене хирĕç ĕçлекен верховнăй комиссар ĕçĕнчен тухнине сутсе-явнă хыççăн ăна хăйне тата унăн сотрудникĕсене вĕсем туса ирттернĕ ĕçсемшĕн тав тăвать. Пысăк йывăрлăхсем пулнă пулин те, тасату ĕçĕнче çитĕнӳ тунă.

«Министрсен совечĕ,—тенĕ малалла,—верховнăй комиссар туса пыракан ĕçсене вăйлатма шутларĕ. Тасату ĕçне хăвăртлатса, çĕршывăн ирĕке кăларнă пайĕнче юлнă фашистсене хăвăрт наказани памалла, çавăн пекех çыхăну начар пулнă пирки тасату ĕçĕ юлса пыракан вырăнсене çав комисси пăхмалла».

Тасату верховнăй комиссарĕн ĕçне верховный Комиссарăн тăватă заместителĕ туса пымалла пулать. Вĕсен ĕçне министрсен совечĕн председателĕ ертсе пырать.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ Афины хулинчен çапла пĕлтерет: январĕн 5-мĕшĕнче ЭЛАС чăсĕсем Афины хулинчен тухса кайнă, вĕсем виçĕ тĕп çулпа тусем хушшинелле кайнă, теççĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче, тесе çырать корреспондент, акăлчансем Афины хулин сурçĕр-хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвелтухăç хĕррисенчи ЭЛАС позицийĕсене тытса илнĕ. Хулан хĕвелтухăç пайĕнче Англи çарĕсем сиенленĕ пысăк тĕрмен çуртне туртса илнĕ. Омон площадĕнчен çурçĕртерехре хаяр çапăçусем пулса иртнĕ, ЭЛАС партизанĕсем унта питĕ вăйлă çапăçнă. Çапăçу унта кашни çуртшăн, кашни пӳлĕмшĕн пулнă. Афины хулинчен хĕвеланăçнелле чакса пыракан ЭЛАС партизанĕсен пысăк мар отрячĕсене Англин «Спитфайр» йышши самолечĕсем пенĕ. Англи самолечĕсем çавăн пекех тата ЭЛАС транспортне пенĕ, 15 автомашина пĕтерсе тăкнă, 16 автомашинăна сиенленĕ.

Корреспондент малалла çапла çырать: январĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн Англи çарĕсем Афины хулин çурçĕр хĕррине тытса илнĕ. Вăл ЭЛАС-ăн хулари тĕреклĕтнĕ юлашки пункчĕ пулнă. Тыткăна илнисем пур. Рабочисем пурăнакан кварталсенче акăлчансем темиçе çĕр хĕрарăма тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле сăрт хушшине кайнă хыççăн ЭЛАС çарĕсем Англи танкĕсене Афины хулинчен 20 мильăра чарса лартнă. Каникаж районĕнче те тытăçусем пулса иртнĕ. Кунта лайăх оборона позицийĕсем пур. Вăл позицисене ЭЛАС çарĕсем тытса тăраççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС) «Ньюс кроникл» хаçатăн Афинăри специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх хăйĕн юлашки сăмахĕнче Пластирас çапла каланă: ЭЛАС-па («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) нимĕнле килĕшӳ та пулма пултараймасть, тенĕ. «Скоби кăларса тăратнă условисене ЭЛАС йышăнмасăр, — тенĕ Пластирас, — Грецире мир пулма пултараймасть. Ман кабинета ирĕклĕх фрончĕн представителĕсене кĕртесси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Революци пĕтсе çĕршывра чăн-чăн мир пулса тăрсан, эпĕ ирĕклĕ суйлавсем туса ирттерме сăмах паратăп. Çав суйлавсем мĕнле иртнине Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Англин тата Россиăн представителĕсем сăнаса тăмалла. Çав суйлавсенче Греци халăхĕ ирĕклĕх фрончĕн представителĕсене правительствăна кĕртме килĕшет пулсан е правительство пĕтĕмпех ирĕклĕх фрончĕн правительстви пултăр тесе шутлать пулсан, вара эпĕ ăна хирĕç пулмăп. Çавăнчен манăн правительствăра ЭЛАС представителĕсем пулма пултараймаççĕ».

«Ньюс кроникл» хаçат корреспонденчĕ хăйĕнчен çапла хушса хурать: Пластирас генерал ЭЛАС çинчен çакăн пек хыттăн каласа хунине пула Афины хулинче кĕтмен япаласем пулма пултараççĕ, тет.

«Дейли мейл» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла калать: çĕнĕ кабинет пирки ЭЛАС мĕн шухăшлани халĕ паллă мар-ха. Анчах партизансем йышăнса тăракан районсенчен килекен хыпарсем тăрăх, çĕнĕ правительствăна ЭЛАС фашистла тата реакциллĕ правительство тесе хаклать. ЭАМ-па («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ») калаçу ăнăçсăр вĕçленес пулсан, е тĕл пулса калаçасси пулмасан, çĕнĕ правительствăн çурçĕрти районсене тасатас ĕçе пуçласа ямалла пулать пуль, теççĕ.

СКОБИ ГЕНЕРАЛ КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапла пĕлтерет: Скоби генерал каланă тăрăх, каласусем пуçласа ямашкăн перемирин тума кăларса тăратнă икĕ условие каялла илнĕ тесе шутламалла. Скоби ЭЛАС руководителĕсене критикленĕ, çав вăхăтрах вăл кĕрешĕве чарса лартмалли çĕнĕ условисене сутсе-явас шутпа ЭЛАС лидерĕсемпе тĕл пулма хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ.

ПОЛЬШĂРА МЕТАЛЛУРГИН ПЫСĂК ЗАВОДНЕ ХУТА ЯНĂ

ЛЮБЛИН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 5-мĕшĕнче Польшăри «Сталева Воля» ятлă металлурги завочĕн пĕрремĕш черетне хута янă.

Вăрçă пуçланиччен пăртак маларах тунă скерне, нимĕçсем ăна каялла чакнă чухне нумай аркатнă. Унăн хаклă оборудованине Германие илсе кайнă. Апла пулин те, завод коллективĕ кĕске вăхăтрах тĕп цехсене тата хăшпĕр ытти цехсене пĕтĕмпех хута янă.

Завода хута янă пирки пухнă митинга 1.500 ытла рабочи, служащи тата инженерпа техниксем пынă. Çавăн пекех митингра Польша, Совет, Англи, Америка тата Франци журналисчĕсем пулнă.

КĔСКЕН

Февраль уйăхĕнче Америка республикисен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ пулса иртмелле. Аргентина правительстви хăйĕн демократие хирĕç пыракан политикине улăштармасан, Аргентинăна çав конференцие чĕнмеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Агроном канашĕсем

Кĕл—паха удобрени

Нумай йышлă опытсем кĕл ытла та паха удобрени пулса тăнине кăтартса параççĕ. Кĕлре калий, фосфор тата известь пур. Анчах та вĕсен шучĕ мĕн çунтарнинчен килет. Çулçăллă йывăç кĕлĕнче калий 10 процент, фосфор 3,5 процент, известь 30 процент; чăрăш тата хыр йывăççисен кĕлĕнче калий 6 процент, фосфор 2,5 процент, известь вара 35 процент. Улăм кĕлĕнче калий 20 процент, фосфор 5 процент, известь 10 процент шутланать. Вĕсемсĕр пуçне кĕл составĕнче тата ытти паха япаласем те пур, вĕсене микроудобренисем теççĕ. Çăн та, ӳсен-тăрана вĕсем нумаях кирлĕ мар, çапах та çав япаласемсĕр тырă лайăх ӳсмест тата тĕрлĕ чирсемпе чирлеме пултарать. Кĕлре микроэлементсем пурри ăна ытти минераллă удобренисенчен уйăрса тăрать. Вăл кăна та мар, кĕлри удобренисем ӳсен-тăрана усă курма ытла та çăмăл. Калий поташ пек, вăл чăсах шывра ирĕлет. Çавăнпа та кĕле типĕ вырăнта тытмалла. Кĕлри фосфорпа известь шывра чăсах ирĕлмеççĕ пулсан та, ӳсен-тăрана усă курма çăмăл. Кĕлре сиенлĕ япаласем çук. Фосфорит çăнăхĕ çинче пулакан хлорлă япаласем чăсах усă вырăнне сиен кӳреççĕ. Тислĕхрен, хлор текен япала çĕрулмири крахмала, сахăр чĕкĕнтерĕнчи сахăра чакарать. Кĕле хуть те мĕнле çĕр çине те тăкма юрать, вăл пур тĕрлĕ ӳсен-тăраншăн та усăллă. Çĕре кĕлпе çемĕçтерсен, ытти минераллă удобренисем тăкмасан та юрать.

Ленинград облаçĕнчи «Большевик» совхозăн çĕрĕ—йӳçеклĕ тăмлă çĕр. Çак çĕр çинче удобренисем тăкман вырăнта гектартан 15 тонна купăста туса илнĕ. Азотлă, калиллĕ тата фосфорлă удобрени çителĕклĕ панă çĕр çинчен 23,6 тонна купăста илнĕ, кашни гектар çине 10 центнер тăкнă çĕр çинчен вара гектартан 27,7 тонна купăста пухса илнĕ. Горький облаçĕнче тунă опыт тăрăх, кĕл тăкнă вырăнта кашни гектартан 23 центнер çĕрулми ытларах илнĕ. Академик Мосолов Хусанти ялхуçалăх институтĕнче тунă опыт тăрăх, кĕл тăкнă вырăнта кашни гектартан 80 центнер ытларах çĕрулми пухса илнĕ. Кĕл тăкнă вырăнта çĕрулми шултăрарах тата пахарах пулнă. Кĕл тăкман вырăнта чирлĕ çĕрулмисем кĕл тăкнă вырăнтинчен 3 хут ытларах пулнă. Кĕл тăкнă çĕр çине лартнă çĕрулминче крахмал та ытларах пулать. Тюменьри сăнав тăвакан пунктра çăнаса пăхнă тăрăх çакна палăртнă: удобрени тăкман вырăнта пĕр гектар çĕр çинчен пухса илнĕ çĕрулмиллен 15 центнер крахмал тухнă. 10 центнер кĕл тăкса çемĕçтернĕ пĕр гектар çĕр çинчи çĕрулминчен 20,0 центнер крахмал тухнă.

Чăваш республикинче тунă опытсем те çавнах çирĕплетеççĕ. Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра, Сĕнтĕр районĕнчи «Авангард» колхозра тунă опытсем кăтартнă тăрăх, гектар çине 7—8 центнер кĕл тăкни çĕрулми тухăçне 29 центнер ытларах ӳстерет. Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра тунă опыт кĕл тăкса гектартан 49.4 центнер ытларах çĕрулми пухса илме май пуррине кăтартса панă.

Кĕл тăкса çĕре çемĕçтерни тĕштырă тухăçне те нумай ӳстерет. Тунă опытсем çакна кăтартаççĕ: тăмлă çĕр çине кашни гектара 7 центнер кĕл тăксан, ыраш тухăçне 3,2 центнер, сĕлĕ тухăçне 2,5 центнер ӳстерет. Улăхри утăн тухăçĕ гектартан 32 центнер ытларах тухнă. Элĕк районĕнчи тырă сортне сăнакан государство участокĕнче тунă опытсем питĕ интереслĕ. Участокăн çĕрĕ йӳçеклĕ, çакна чăрăш тăрри, кăшкар ути текен кураксем йышлăн ӳсни лайăх çирĕплетсе парать. Çак çĕр çинче ыраш, сĕлĕ, пăри вăтам тухăçлă пулнă, çав вăхăтрах тулă, пăрса, ясмăк, вика тухăçлăхĕ çулран çул чакса пынă. Клевер тата кĕрхи тулă та начар тухăçлă пулнă. Пăтăта йышши культурăсем акмалли вырăна кĕркуннерен кашни гектара 8 центнер фосфорит çăнăхĕпе çемĕçтернĕ, унсăрăн пуçне çуркунне, çĕр ăшăнсан хыççăнах 8 центнер кĕл тăкнă. Çавăн хыççăн участокра тырă тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳснĕ. Пăри гектартан 32,5 центнер пăрса 23 центнер, вăрлăхлăх вика 32 центнер тухнă. Сортоучасток ĕçлеме тытăннăранпа та пăрçан, ясмăкăн, тулăн тата викăн тухăçлăхĕ çак çулхи пек пысăк пулман.

Хăрăм кĕлрен те паха удобрени пулса тăрать. Унăн составĕнче 2 процент азот 0,7 процент фосфор, 2 процент калий пур. Çак япаласем пĕтĕмпех—ӳсен-тăраншăн паха тата питĕ кирлĕскерсем. Хăрăма кĕлпе пĕрле пăтраштарса усă курсан аван.

Кĕле кашни колхозрах темĕн чухлĕ хатĕрлеме пулать. Халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, тĕрлĕ минераллă удобренисемпе анлăн усă курма кашни колхозах пултараймасть. Çавăнпа та халĕ тĕп удобрени шутĕнче тислĕкпе кĕл пулса тăраççĕ. Кĕле кашни хуçалăхрах хĕл каçиччен 1,5—2 центнер пухма пулать. Унсăр пуçне, хуласенчи тĕрлĕ предприятисенче те кĕл пухассине организацилеме пулать. Ку тĕлĕшпе фабрикăсемпе заводсем çывăхĕнчи колхозсен, çав предприятисен дирекцийĕсемпе килĕшсе, предприятисенче пухăнакан удобренипе усă курассине йĕркелемелле.

Юлашкинчен, кĕлпе мĕнле усă курмалли çинчен. Кĕле хуть те мĕнле тырă, техникăллă культура тата пахча-çимĕç валли уйăрнă вырăнсенче те усă курма юрать. Анчах та çĕрулми, клевер, йĕтĕн, махорка, чĕкĕнтĕр тата пăрса йышши тырăсем акмалли вырăнсене çемĕçтерни лайăхрах. Малтан кĕле вĕçтермесĕр ана çине пĕр тикĕс сапмалла, унтан вара çийĕнчех сухаласа пăрахмалла. Пĕр гектар çине, калиллĕ удобрени пултăр тесен, улăм кĕлне 4—5 центнер тăкма пулать. Фосфоритлă удобрени кирлĕ çĕр çине тепĕр çавăн чухлĕ тăкмалла. Известьлĕ удобрени пултăр тесен, тата ытларах тăксан та юрать.

Халĕ вырăнти удобренисене хатĕрлемелли уйăхлăх пырать. Вăйлă тырпул туса илес тесен, ытларах кĕл хатĕрлеме тăрăшмалла. Кашни колхозник тата колхозница кĕле хака хурса, лайăх сыхламалла ăна пĕтĕмпех колхоза памалла.

Агроном Н. НИКИТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 3, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00006 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.